25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ИЮЛЬ
23
КӖҪНЕРНИКУН
170(6105) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Хуласене хӗле хатӗрлер

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи иккӗмӗш хӗл ҫывхарса килет. Иртнӗ ҫулсенчи практика кӑтартса панӑ тӑрӑх ҫакӑ уҫҫӑнах курӑнчӗ: хӗле лайӑх хатӗрленсе ҫитсе илнӗ хуласенчи предприятисем хӑйсен ӗҫне пур енӗпе те ӑнӑҫлӑн туса пыма пултараҫҫӗ тата, пачах урӑхла, хӗле хатӗрленсе ҫитмен предприятисен ӗҫӗнче хӗллехи сивӗ кунсенче тӗрлӗ чӑрмавсем пулаҫҫӗ. Ҫак чӑнлӑх ӗнтӗ пирӗн умма халӗ пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратать. Хуласенчи предприятисен, учрежденисен, шкулсен, больницӑсен халех хӗле хатӗрленме тытӑнас пулать.

ВКП(б) Шупашкар горкомӗн ҫак кунсенче пулса иртнӗ пленумӗ, хӗле хатӗрленесси ҫинчен ыйтӑва сӳтсе-явса, питех те тӗрӗс турӗ, мӗншӗн тесен чылай предприятисенче кутӑрана ҫитсе те хӗле хатӗрленес тӗлӗшпе нимӗнех те туман-ха. Вӗсен руководителӗсем иртнӗ хӗлте пулнӑ йывӑрлӑхсем ҫинчен манса кайнӑ пулмалла, ҫавӑнпа та вӗсем кӑҫал топливо, чӗртаварсем хатӗрлес, тӗрлӗ ҫуртйӗрсене юсаса йӗркене кӗртес тӗлӗшпе татӑклӑ ӗҫсем туса пымаҫҫӗ. Ҫакӑн пек тӗслӗхсене республикӑн чылай хулисенче тӗл пулма пулать.

Сӑмахран, Шупашкар хулинче хӗле хатӗрленес ӗҫсем мӗнле пулса пыраҫҫӗ-ха? Тӳрех каламалла, ҫителӗксӗр. Хула валли III-мӗш кварталта вутӑ хатӗрлемелли плана июлӗн 15-мӗш тӗлне пӗтӗмпе те 7 процент кӑна пурнӑҫа кӗртнӗ. Вӑрман хатӗрлекен организацисем, уйрӑмӑнах вӑрманпромхозӗ, вутӑ хатӗрлесе турттарса тухас тӗлӗшпе калама ҫук начар ӗҫлеҫҫӗ. Предприятисемпе учрежденисенче оборудованисемпе ҫуртйӗрсене юсас ӗҫсем вӑраххӑн пулса пыраҫҫӗ, пурӑнмалли ҫуртйӗрсене ремонт тума пачах та тытӑнман темелле. Хула совет исполкомӗ пурӑнмалли ҫуртсене капитальнӑй ремонт тӑвас плана 11 процент кӑна тултарнӑ. Хӗле кӗтсе илме уйрӑмӑнах Водосветпа ытти коммунальнӑй предприятисем ҫителӗксӗр хатӗрленеҫҫӗ. Хула мунчине, шкулсене ремонтлама тытӑнман. Пурӑнмалли ҫӗнӗ ҫуртсем туса лартас ӗҫ те вӑраххӑн пулса пырать. Ҫак ӗҫсене тунӑ ҫӗрте вырӑнти, шалти ресурссемпе пӗтӗмпех усӑ курма тӑрӑшни курӑнмасть-ха.

Паллах, хӗле хатӗрленес ӗҫсем ҫакӑн пек пулса пынине малашне чӑтса тӑма ҫук. Партипе совет организацисен руководителӗсен хуласене хӗле хатӗрлес тӗлӗшпе халех тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла. «Ӗлкӗрӗпӗр-ха» тесе ларас йӑла пачах пулмалла мар. Вутӑ хатӗрлес, ҫуртйӗрсене ремонтлас ӗҫсенче халех татӑклӑ улшӑну тупи кирлӗ.

Ку ҫеҫ мар-ха. Хуласене хӗле хатӗрлес тӗлӗшпе сугу-илӳ тата хатӗрлев организацийӗсем те пысӑк ӗҫ туса ирттермелле. Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсем валли кирлӗ продукци туса кӑларакан рабочисемпе служащисен хӗл вӑхӑтӗнче апат-ҫимӗҫ ҫителӗклӗ пулмалла, ӑна суту-илӳ организацийӗсемпе заготовительсен халӗ, хӗле кӗриччен, хатӗрлесе хумалла. Иртнӗ хӗлте Канашра тата ытти хуласенче пахча-ҫимӗҫсем енӗпе хӑшпӗр ҫитменлӗхсем пулкаларӗҫ, мӗншӗн тесен суту-илӳ организацийӗсем, май пур ҫӗртенех, ҫӗрулмипе ытти ҫимӗҫсене вӑхӑтра хатӗрлесе турттарса тухман. Анчах кӑҫал пӗлтӗрхи йӑнӑшпа тепӗр хут тумалла мар. Кӗркуннехи сивӗ кунсем килсе ҫитиччен пахчаҫимӗҫсене пӗтӗмӗшпех хатӗрлесе турттарса тухмалла.

Апла пулин те Чебторгпа Шупашкарти столовӑйсен трестӗ хӗле хатӗрленес ӗҫсене тивӗҫлипе туса пымаҫҫӗ-ха. Колхозсемпе договорсем тӑвас плана вуншар процент ҫеҫ пурнӑҫа кӗртнӗ. Пахча-ҫимӗҫсене усрамалли складсене, катка-пичкесене хатӗрлес ӗҫ вӑраххӑн пулса пырать. Ытти чылай хуласенче те ҫак ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пырать-ха.

Хуласене, предприятисемпе учрежденисене хӗле хатӗрлесси — хальхи чи пысӑк задачӑсенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртни — фронт валли тӗрлӗ продукцисем туса кӑлармалли программӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме май паракан условисенчен пӗри. Ҫавӑнпа та предприятисене хӗле хатӗрлес ӗҫе хамӑрӑн пӗтӗм вӑя мобилизацилемелле. Вутӑ хатӗрлес, ҫуртйӗрсене юсаса курас тӗлӗшпе воскресникосем туса ирттермелле, вӑрманта ӗҫлеме ҫителӗклӗ тарапах ӗҫ вӑйӗ парса тӑмалла.

Кашни предприятин, кашни учрежденин, пурӑнмалли кашни ҫуртӑн хӗл вӑхӑтӗнче хутма кирлӗ чухлӗ вутӑ пултӑр, кашни ҫурт юсавлӑ пултӑр, савӑсе пула пирӗн фабрикӑсемпе заводсен ӗҫӗнче чӑрмавсем ан пулччӑр, — ҫакӑншӑн тӑрӑшас пулать халӗ хула совечӗсемпе ВКП(б) хула комитечӗсен тата предприяти руководителӗсемпе пуҫламӑш парторганизацисен.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июлӗн 21-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июлӗн 21-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем **Воронеж** районӗнче тата **Ворошиловградран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерех вырӑнта ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Июлӗн 20-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 10 танкне, войскӑсемпе груэсем турттарса пыракан 140 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен 3 складне тата горючи усракан 2 склада сирпӗнтерсе янӑ, полевой тата зенитнӑй артиллерин 3 дивизионне пусарса лартнӑ, торпеднӑй катера путарнӑ, противникӑн пехотине икӗ ротӑна ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Воронеж районӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ пыра-пыра ҫапса ӑна хӗснӗ. Участоксенчен пӗринче пирӗн часть нимӗҫсене темиҫе опорнӑй пункттан хӗссе кӑларнӑ, нимӗҫсен пехотине 4 ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата 22 оруди, 10 миномет, 23 пулемет, штабӑн 4 машинине, 18.000 патрон, 3.000 снаряд, 1.000 мина тата ытти тӗрлӗ трофейӑсем тытса илнӗ. Тепӗр участокра совет артиллерисчӗсемпе минометчикӗсем икӗ эрне хушшинчи ҫапӑҫусенче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 10 пин ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ тата тӑшманӑн темиҫе вуншар танкне, 378 автомашинине, боеприпассемпе ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 60 лавне, 30 орудине прислугипе пӗрлех, минометсен 14 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ, 32 оруди тата снарядсем нумай тытса илнӗ.

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ пирӗн боецсемпе командирсем хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр паттӑррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Кӗҫӗн лейтенант Комиссаров пӗр ҫапӑҫура 40 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Совет Союзӗн Геройӗ летчик-капитан Миронов юлташ сывлӑшри ҫапӑҫусенче темиҫе кун хушшинче нимӗҫсен 5 самолетне персе ӳкернӗ. Танкист Занайлов юлташ нимӗҫсен противотанковӑй туппине тата 30 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Хӑйӗн чаҫне таврӑннӑ чухне Занайлов юлташ нимӗҫсен пӑрахса хӑварнӑ орудине танкран кӑкарнӑ та ӑна хӑйпе пӗрле илсе ҫитернӗ.

* * *

Ворошиловград хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерех вырӑнта пирӗн войскӑсем оборонӑлла вӑйлӑ ҫапӑҫусем туса пыраҫҫӗ. Противник нумай вӑй пухса хатӗрленӗ уйрӑм участоксенче пирӗн чаҫсем ҫӗнӗ рубежсем патне чакнӑ. Танковӑй часть, хамӑрӑн тӗп вӑйсене хӳтӗлесе пырса, пӗр кун хушшинче гитлеровецсен танкӗсемпе мотопехотине хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Совет танкисчӗсем нимӗҫсен 500 салтакӗпе офицерне яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ, тӑшманӑн 7 танкне, 2 орудине, 11 пулеметне тата темиҫе минометне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем виҫӗ кун хушши тӑшманӑн унки варринче пулнӑ, унтан вӗсем ҫав ункӑран татса тухнӑ та хӑйсен чаҫӗ патне мӗнпур хӗҫпӑшалӗсемпех ҫитнӗ.

* * *

Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн часть тӑшманӑн оборонине татса кӗнӗ те нимӗҫсене халӑх пурӑнакан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пунктран хӗссе кӑларнӑ. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫсен пехотнӑй полкне ҫапса аркатнӑ, ҫав полк хӑйӗн йышӗн ҫуррине ытла тата хӗҫпӑшал нумай ҫухатнӑ. Хӑйсен ҫухатнӑ позицийӗсене каялла тавӑрас тесе, гитлеровецсем артиллерипе танксем пулӑшнипе 12 хутчен контратака тунӑ. Пирӗн боецсем противникӑн мӗнпур атакисене сирсе пӑрахнӑ. Пирӗн летчиксем, хамӑрӑн ҫӗр ҫинчи чаҫсене пулӑшса пырса, нимӗҫсен 7 самолетне персе ӳкернӗ, 6 танкне тата 18 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнче противникӑн вак отрячӗсемпе тытӑҫкаласа илнӗ тата разведчиксем сӑнаса-шыраса ҫӳренӗ. Афанасьев юлташӑн подразделение хирӗҫ нимӗҫсем 12 танк тата пӗр батальона ҫити пехота янӑ. Оруди командирӗ Смирнов юлташ хӑйӗн туппине уҫӑ позицие илсе тухса вырнаҫтарса лартнӑ та нимӗҫсен виҫӗ танкне персе ҫӗмӗрнӗ. Противникӑн атакине сирсе янӑ. Капитан Григорьевпа старши-лейтенант Аврамов ертсе пыракан разведчиксен отрячӗ, противникӑн инҫетри тылне кӗрсе кайса, нимӗҫсен транспортнӑй колоннине тапӑннӑ. Пирӗн боецсем 75 гитлеровеца вӗлернӗ тата нимӗҫсен артиллери снарячӗсем тиенӗ 40 лавне, продовольстви тиенӗ автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен 5 салтакне тыткӑна илсе, разведчиксем хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

«Смерть немецким оккупантам» ятлӑ отрядри партизансен ушкӑнӗ противникӑн ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. 25 вагон ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Крушени вӑхӑтӗнче гитлеровецсем 250 ҫынтан кая мар вилнӗ е аманнӑ.

* * *

Белорусси ССР-ӗнчи Кричевски районри 18 яла нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем пӗтӗмӗшпех юхӑнтарса ҫаратса пӗтернӗ. Ҫав ялсенчи икӗ пин ҫынна ытла гитлерла мерзавецсем асаплантарса тата персе вӗлернӗ. Оккупантсем хресченсенчен мӗнпур хаклӑ пурлӑха, мӗнпур выльӑх-чӗрлӗхе тата кайӑк-кӗшӗке туртса илсе Германие ӑсатнӑ. Гитлерла бандитсем колхозниксен пурӑнмалли ҫурчӗсемпе ытти ҫуртйӗрӗсене нумайӗшне ҫунтарса янӑ.

* * *

Францири патриотсем гитлеровецсемпе вӗсен тарҫисене хирӗҫ кӗрешӗве сарса вӑйлатса пыраҫҫӗ. Парижри инмӗҫсен 3 офицерне тата икӗ предателе вӗлернӗ. Анатри Сена департаментӗнче тырпул складне ҫунтарса янӑ, ҫав тырпул нимӗҫсем халӑхран туртса илнӗскер пулнӑ. Пуатье чугунҫулӗ ҫинчи кабеле татса пӗтернӗ, ҫавна пула поездсем ҫӳреме чарӑннӑ. Оккупантсене хирӗҫ ҫамрӑксем уйрӑмӑнах активлӑн кӗрешеҫҫӗ.

Июлӗн 22-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июлӗн 22-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ **Воронеж** районӗнче тата **Ворошиловград** хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерех вырӑнта ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Воронеж районӗнче пирӗн войскӑсем противника хӗссе пынӑ, унӑн Дон урлӑ каҫмалли кӗперӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Пӗр участокра гитлеровецсем шоссе ҫулне вӑйлӑн хӳтӗленӗ. Пирӗн танкистсем противник хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрнӗ, унӑн 17 танкне тата пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкса, ҫав шоссене тытса илнӗ. Тепӗр участокра артиллеристсем Шеметов, Фесин тата Иванов юлташсем орудисене малалла илсе тухнӑ та, вӗсенчен тӳррӗн персе, тӑшманӑн пехоти ларса пыракан 10 автомашинӑна ҫӗмӗрнӗ тата кӗпер патне пымалли ҫула пӳснӗ. Наводчик Куликов юлташ нимӗҫсен орудине тытса илнӗ; ӑна противник еннелле ҫавӑрса лартса, вӑл каялла чакакан нимӗҫсене пере-пере вӗлернӗ. Красноармеец Сокол юлташ, противотанковӑй пӑшалпа персе, нимӗҫсен 3 танкне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Ворошиловградран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерех вырӑнта пирӗн войскӑсем оборонӑлла ҫапӑҫусем туса пынӑ, уйрӑм участоксенче, противникӑн йышлӑрах вӑйӗсем хӗснипе, ҫӗнӗ позицисем патне чакнӑ. Пӗр участокра нимӗҫ войскисен малалла татса кӗрсе кайма май килнӗ. Пирӗн чаҫсем противникӑн ҫав группировкине флангсенчен пырса ҫапнӑ, унтан ӑна артиллерипе минометсенчен вӑйлӑн персе тӑрса йӑлтах пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен ҫав ҫапӑҫура пӗр полк ытла пехота, 19 танк, 65 автомашина, горючи тултарнӑ 3 автоцистерна тата 7 противотанковӑй орудипе пӗтнӗ. Тепӗр участокра пирӗн саперсем хурса тухнӑ минӑсем ҫине пулса, нимӗҫсен 4 танкӗ тата пехота ларса пыракан 7 автомашини сирпӗнсе кайнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнче вырӑнти ҫапӑҫусем пулса пынӑ тата артиллерирен перкелешнӗ. Пӗр участокра противникӑн пехотипе танкӗсем пирӗн чаҫӑн тылне шӑтарса кӗрсе кайма хӑтланнӑ. Сивяков юлташ командир пулса ертсе пыракан батарейӑн артиллерисчӗсем вӗсем ҫине пеме тытӑннӑ та, нимӗҫсен 6 танкне пӗтерсе тӑкнӑ, гитлеровецсене сапаласа янӑ. Старши лейтенант Федоровӑн батарейи, пӗр рубежран теприн ҫине куҫса пырса, 4 кун хушши пӗр чарӑнмасӑр ҫапӑҫнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче артиллеристсем нимӗҫсен 3 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата противникӑн 300 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Украинӑн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен И. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ нимӗҫсен чаҫӗн штабӗ ҫине пырса тапӑннӑ. Партизансем нимӗҫсен 25 салтакӗпе 11 офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, пӗр бронемашинӑна, 2 грузовой тата пӗр ҫӑмӑл машинӑна ҫунтарса янӑ.

* * *

Нимӗҫсен 329-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 553-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ салтак Генрих Вебер ҫапла калаҫа панӑ: «Эпӗ Хӗвелтухӑҫ фронтне 329-мӗш запасной батальонпа пӗрле нумаях пулмасть килтӗм. Вӑл батальона Герфорд хулинче пухса йӗркеленӗ. Пирӗн вӗренсе пӗтерме май килмерӗ, мӗншӗн тесессӗн 329-мӗш дивизие, хытӑ тустарнӑскере, ҫын часрах хушса памалла пулнӑ. Малти позицисем патне ыран каймалла тенӗ чух вырӑссем пире кӗтмен ҫӗртен атакӑларӗҫ. Ҫӗрлехи ҫапӑҫура пӗррремӗш ротӑра 25 ҫын вилнӗ, нумай салтак аманнӑ. Ҫав ҫӗр пирӗн фронта тин ҫеҫ пырса ҫитнӗ пӗтӗм батальон та пысӑк ҫухатусем тӳснӗ».

* * *

Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Смоленск облаҫӗн хӑйсем оккупациленӗ районӗсенчи мирлӗ халӑха пӗтерсе пыраҫҫӗ. Нумаях пулмасть эсэсовецсен карательнӑй отрячӗ Ленинцы ялӗнчи ҫынсене тискеррӗн асаплантарнӑ. Гитлеровецсем ҫав ялта 20 пӳрте ҫунтарса янӑ, 270 ҫынна — кӗрарӗмсемпе ачасене тата старИксене асаплантарса, персе вӗлернӗ.

* * *

Финляндири тӗрмесем фронтран тарнӑ салтаксемпе тулса ларнӑ. Пелсо хулинчи тӗрмере, 300 ҫын валли тунӑскерте, 2.000 ҫын пурӑнать. Коннунсуопа Турку тӗрмисенче пӗччен лармалли камерӑсенче 5—6-шар ҫын ларать. Таркӑнсен вӑрмансенче пытанса ҫӳрекен хӗҫпӑшаллӑ отрячӗсем, «вӑрманти гварди» ятлӑскерсем, ӳснӗҫемӗн ӳссе пыраҫҫӗ. Ҫавӑн пек отрядсенчен пӗри, 200 ҫити салтакран тӑраканскер, нимӗҫсем вырӑнаҫнӑ бараксем ҫине пырса тапӑннӑ та 30 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Миккели ҫывӑхӗнчи вӑрмансенче пытанса ҫӳрекен тепӗр отряд нумаях пулмасть нимӗҫсен обозне тапӑннӑ та продовольстви тиенӗ 5 лава тытса илнӗ.

Воронеж районӗнчи ҫапӑҫусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлӗн 21-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Дон хӗрринче, Воронеж районӗнче малтанхи пекех хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Вӑйлӑ та юнлӑ ҫапӑҫусене пур йышши войскӑсем те хутшӑнаҫҫӗ: танксем те, пехота та, артиллери те, авиаци те. Ҫӗрӗн кашни пусӑмӗшӗн ҫапӑҫу сарӑлса пырать.

Совет войскисем нимӗҫсене ҫине тӑрсах Дон патнелле хӗсеҫҫӗ. Эпир мӗн чухлӗ вӑйлӑрах хӗсетпӗр — тӑшман ҫавӑн чухлӗ хаяртарах хирӗҫ тӑрать. Фашистсем оборонӑн опорнӑй пункчӗсем тума тӑрӑшаҫҫӗ. Аманнӑ гитлеровецсене илсе каякан вӗҫӗ-хӗррисӗр эшелонсене хирӗҫ кунталла мадьярсемпе румынсенчен пухса тунӑ маршевӑй батальонсен юхӑмӗ пӗр таталмасӑр юхать.

Гитлеровецсем хӑйсен вилнӗ салтакӗсене пухса ӗлкӗреймеҫҫӗ, йывӑр аманнисене вӗсем ҫапӑҫу хирӗнчех вӗлерсе хӑвараҫҫӗ. Тӑшман Дон урлӑ каҫмалли кӗперсене хӑйӗн аллинче хӑвармашкӑн пӗтӗм вӑйран тӑрӑшать. Анчах унӑн ӗҫӗ ӑнмасть. Противникӑн икӗ пыв хушшинчи районри икӗ пысӑк кӗперне пирӗннисем тытса илнӗ. Енер Воронежран кӑнтӑртарах вырӑнта совет чаҫӗсем малалла куҫнӑ. Артиллеристсем халӗ нимӗҫсен виҫҫӗмӗш кӗперӗ ҫине персе тӑраҫҫӗ. Тӑваттӑмӗш кӗпере кашни кун тенӗ пекех пирӗн авиаци штурмлать.

Воронежран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерех вырӑнта пехотинецсем, танксемпе ҫыхӑнса кӗрешсе, малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан пунктӑн хӗррине ҫӗмӗрсе кӗнӗ (вӑл пункт шоссе ҫулӗ ҫинче ларать). Воронеж патне кӑнтӑр енчен пымалли вырӑнсенче пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан пысӑк пункта йышӑнса илнӗ. Фашистсем юханшывӑн хӗвеланӑҫ енне тараҫҫӗ.

Пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ пулин те, нимӗҫсем час-часах контратакӑсем тӑваҫҫӗ.

Воронеж районӗнче ҫапӑҫусем кӑнтӑрла та, ҫӗрле те чарӑнмаҫҫӗ.

Г. КРЫЛОВ.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли — ӑшӑ тумтирсем

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Хӗрлӗ Ҫар валли ӑшӑ тумтирсем пухас тӗлӗшпе ӗҫлекен ялти комиссисем пур ялсенче те колхозниксен пухӑвӗсенче отчетсем туса пачӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн комиссисен председателӗсен канашлӑвне туса ирттертӗмӗр.

Районра июлӗн 20-мӗш тӗлне 250 килограмм ҫӑм, 200 тир пухнӑ. Кусемсӗр пуҫне тата 15 кӗрӗк пиншак, 29 кӗпе, 34 алшиш, 5 ӑшӑ шалавар, 30 метр килти пир, 43 минтер пичӗ, 3 ҫивитти, 11 ҫӗлӗк пухнӑ.

Кӳлхӗрринчи «Трактор» колхозӑн председателӗ Колбасов юлташ, отечественнӑй вӑрҫӑран аманса таврӑннӑскер, ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫе лайӑх организациленӗ. Ку колхозри колхозниксем 32 тир, 12 килограмм ҫӑм, 6 ҫӗлӗк, 4 мӑшӑр кӗпе-йӗм, 6 алшӑлли, 1 ҫивитти, 7 мӑшӑр алшиш панӑ.

Г. СКВОРЦОВ.
Ӑшӑ тумтирсем пухассипе ӗҫлекен районри комиссин председателӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫарӑн начальствующи тата рядовой составне Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене **Ленин** орденӗпе **«Золотая Звезда»** медаль парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас:

1. Красноармееца Николай Яковлевич **Ананьева.**
2. Красноармееца Григорий **Безродная.**
3. Красноармееца Николай Никанорович **Болотова.**
4. Красноармееца Яков Александрович **Бондаренкӑна**
5. Красноармееца Илларион Романович **Васильева.**
6. Сержанта Иван Евстафьевич **Добробабина.**
7. Красноармееца Петр Данилович **Дутова.**
8. Красноармееца Петр Кузмич **Емцова.**
9. Красноармееца Нарсутбай **Есибулатова.**
10. Красноармееца Дмитрий Митрофанович **Килайникова.**
11. Красноармееца Аликбай **Касаева.**
12. Политрука Василий Георгиевич **Клочкова.**
13. Красноармееца Аскар **Кожебергенова**
14. Красноармееца Григорий Ефимович **Конкина.**
15. Красноармееца Абрам Иванович **Крючкова.**
16. Красноармееца Николай Гордеевич **Максимова.**
17. Старши сержанта Гаврил Степанович **Митина.**
18. Красноармееца Николай **Митченкона.**
19. Красноармееца Иван Васильевич **Москаленкона.**
20. Красноармееца Иван Моисеевич **Натарова.**
21. Краснармееца Григорий Алексеевич **Петренкӑн.**
22. Красноармееца Мусабек **Сенгирбаева.**
23. Красноармееца Дмитрий Фомич **Тимофеева.**
24. Красноармееца Николай Игнатьевич **Трофимова.**
25. Красноармееца Иван Демидович **Шадрина.**
26. Красноармееца Душанкул **Шапокова.**
27. Красноармееца Григорий Михайлович **Шемякина.**
28. Красноармееца Иван Алексеевич **Шепеткова.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулти июлӗн 21-мӗш.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечӗн пленумӗ

Июлӗн 20—21-мӗшсенче ВКП(б) Шупашкар хула комитечӗн XVI-мӗш пленумӗ пулса иртрӗ.

1942 ҫулти иккӗмӗш кварталта партие илес ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен хула комитечӗн секретарӗ М. Романова юлташ доклад туса пачӗ. Кӑҫал иккӗмӗш кварталта партин хула комитечӗ ВКП(б) членне 38 ҫынна, ВКП(б) членӗн кандидатне 28 ҫынна илнӗ. Парти ретне рабочисене илес ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пырать, виҫӗ уйӑх хушшинче парти ретне рабочисенчен 10 ҫынна кӑна илнӗ. Партие ҫӗнӗ членсем илес енӗпе Бенский юлташ директор пулса ӗҫлекен заводри, пир-авӑр фабрикинчи парторганизацисем начар ӗҫлеҫҫӗ. Канатов юлташ директор пулса ӗҫлекен заводри, чӑлха фабрикинчи парторганизацисенче те партие илес ӗҫ кирлӗ пек пулса пымасть. Ҫак предприятисенчи пуҫламӑш парторганизацисем партин организациллӗ ӗҫне тата партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе ҫителӗксӗр туса пынӑ. Парторганизацисен секретарӗсем партие илес ыйтӑва партбюро ларӑвӗсенче тата парти пухӑвӗсенче сӳтсе-явман.

Доклад тӑрӑх пренире Наумова (пир-авӑр фабрики), Маркосов (хула совечӗн исполкомӗ), Поддубко, Каменецкий (чӑлха фабрики), Полукаров, Охандерова (ВЛКСМ хула комитечӗн секретарӗ), Каляканов (Вырӑнти промышленность Халӑх Комиссариачӗ) тата Дьяконов (сӑкӑр пӗҫерекен комбинат) юлташсем тухса каларӗҫ.

Ку ыйту тӑрӑх йышӑннӑ решенире ВКП(б) хула комитечӗн бюровне тата пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене пленум ҫак ӗҫсене тума хушса хӑварчӗ: рабочисемпе интеллигентсем хушшинчи партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе лайӑхлатмалла, партипе массӑсем хушшинчи ҫыхӑнӑва ҫирӗплетес тӗлӗшпе татах та тимлӗнрех ӗҫлемелле, массӑсен активлӑхне ӳстерсе пымалла. Партире тӑман актив хушшинчи ӗҫе вӑйлатма, активӑн ӗҫри ӑсталӑхне тата политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерме тӑрӑшмалла. Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хӑйсем халӑха парӑнса ӗҫленине кӑтартнӑ чи лайӑх ҫынсене парти ретне илес тӗлӗшпе парторганизацисен ытларах ӗҫлемелле. Партие илнӗ чухне кашни ҫынна уйрӑммӑн суйласа илес ленинла-сталинла принципа ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пымалла. Хӗрарӑмсене тата чи лайӑх комсомолецсене партие илес ӗҫе вӑйлатас пулать.

ВКП(б) членӗн кандидачӗсене парти ӗҫне, общественӑллӑ ӗҫе ытларах хутшӑнтармалла. Вӗсен политикӑллӑ пӗлӗвӗсене ӳстерме тӑрӑшмалла. Вӗсенчен парти поручениӗсене пурнӑҫа кӗртес енӗпе хытӑрах ыйтмалла.

Хӗле кӗме хатӗрленесси ҫинчен пленум хула совет исполкомӗн председателӗн Золотников юлташӑн докладне итлерӗ. Хулари промышленность тата коммунальнӑй хуҫалӑх предприятийӗсене, шкулсене, больницӑсене тата ытти учрежденисене хӗллехи вӑхӑтра пӗр чӑрмавсӑр ӗҫлемелле туса хатӗрлесе ҫитерес ӗҫ начар пырать. Ҫуртйӗрсене хӗле кӗричченех юсаса ҫитерес, чӗртавар тата кутмалли япаласем хатӗрлес ӗҫ ҫине чылай предприятисемпе организацисен руководителӗсем ҫиелтен пӑхаҫҫӗ. Уйрӑмах вутӑ касса турттарса хатӗрлес ӗҫ начар пырать.

Ку ыйтупа ҫак юлташсем тухса каларӗҫ: Калиновский (кинофикаци управленийӗ), Масленников (Чебторг), Соколов (Вӑрманпромхоз), Арзамасцева (хула совечӗн сывлӑха сыхлав отделӗ), Степанов, Малькова (торф предприятийӗ), Герасин (столовӑйсен трестӗ), Новиков (Коммунальнӑй хуҫалӑх халӑх комиссарӗ), Кириллова (хула совечӗн ҫутӗҫ отделӗ), Логинов (пир-авӑр фабрики), Антонов (водосвет), Астин (хула совечӗн коммунальнӑй хуҫалӑх отделӗ), Леонтьев (хула прокурорӗ).

Юлашкинчен ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн тата хула комитечӗн секретарӗ Чарыков юлташ тухса сӑмах каларӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче хула хуҫалӑхӗнче йӗркелӗх тӑвас ыйтусем ҫинче, уйрӑмах вутӑ тата торф хатӗрлесси ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

Пленум ҫак ыйту тӑрӑх йышӑннӑ резолюцире хӗллене хатӗрленес тӗлӗшпе ӗҫе вӑйлатма кирлине кӑтартса пачӗ. Хула валли хӗле кӗричченех ҫителӗклӗ таранах вутӑ хатӗрлемелле. Предприятисен ҫурчӗсене, оборудованийӗсене, шкулсене, больницӑсене, мунчасене юсаса ҫитермелле. Ремонт ӗҫӗнче предприятисемпе учрежденисен хӑйсен ресурсӗсемпе туллин усӑ курас пулать. Ҫӗнӗрен лартакан пурӑнмалли ҫуртсене хӑвӑртрах ӗлкӗртмелле. Хатӗрлев организацийӗсене хула валли пахча-ҫимӗҫ, ҫӗрулми, кӑмпа, вӑрман ҫырлисем хатӗрлемелли плана пурнӑҫа кӗртмелле.

Хӗллене хатӗрленес ыйтӑва парти пухӑвӗсенче сӳтсе-явса, мӗнле ӗҫсем тумаллине палӑртса решенисем йышӑнмалла. Ҫав решенисене пурнӑҫа кӗртме коммунистсене, комсомолецсене тата мӗнпур ӗҫҫыннисене мобилизацилес пулать.

Кӗркунне тата хӗлле предприятисем йӗркеллӗ ӗҫлени фронта валли ытларах та ытларах продукци туса кӑларассине пурнӑҫа кӗртме май парӗ.

Сталинла премиӗ лауреачӗсене дипломсем пачӗ

Июлӗн 20-мӗшӗнче Сталинла премисен комитетӗнче Сталинла премисен лауреачӗсене, хальхи вӑхӑтра Мускавра пурӑнаканнисене, дипломсем панӑ.

Совет Союзӗн Совнаркомӗ ҫумӗнчи Аслӑ шкулсен ӗҫне пӑхса тӑракан Комитетӑн председателӗ С. В. Кафтанов юлташ награда илнӗ ҫынсене саламланӑ.

Чи малтан историлле наукӑсен докторӗ. В. П. Потемкин тата академик Е. В. Тарле дипломсем илнӗ. Вӗсем хыҫҫӑн президиум сӗтелӗ патне пырса ҫаксем дипломсем илнӗ: пӗррремӗш рангри ҫар инженерӗ Н. И. Иванов, ӑна оборона валли паха прибор шухӑшласа кӑларнӑшӑн награда панӑ; наукӑн тава тивӗҫлӗ деятелӗ А. В. Вишневский, ӑна новокаиновӑй блокада тата ҫуллӑ-бальзамлӑ ҫыхӑ шухӑшласа тупса ӗҫе кӗртнӗшӗн Сталинла премиӗ панӑ; профессор С. С. Юдин, ӑна ҫар хирургийӗ тӗлӗшпе наукӑллӑ кӗнекесем ҫырнӑшӑн панӑ; Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ С. В. Ильюшин, ӑна самолетӑн ҫӗнӗ конструкцине шухӑшласа тунӑшӑн премиӗ панӑ; Б. Г. Шпитальный, ӑна авиацин ҫӗнӗ йышши хӗҫпӑшалне шухӑшласа кӑларнӑшӑн премиӗ панӑ, т. ыт. те. (ТАСС).

Парти организацийĕсем тата социализмлă ăмăрту

С. КРЫЛОВ,
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ

Оборона Халăх Комиссарĕ, пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ майăн пĕрремĕшĕнчи приказра Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм совет халăхĕ умне 1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкмалли çулталăк туса хурас задача лартрĕ. Сталин юлташăн приказĕ рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен, служащисен тата ялхуçалăхĕнчи работниксен ĕçри хастарлăхне нихçанхинчен вăйлăн çĕклентерчĕ.

Хура металлургин, авиаципе танк промышленноçĕсен малта пыракан коллективĕсен пуçарăвĕпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн хумĕ мĕнпур çĕршыв тăрăх анлăн сарăлчĕ, вăл фронта пур енлĕ пулăшу парса тăрас тĕлĕшпе пĕтĕм халăхăн движенийĕ пулса тăчĕ.

Пирĕн республикăри предприятисенчи, транспортри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, служащисем, промысла артелĕсен членĕсем, мĕнпур ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Сталин юлташăн [illegible] кĕрешÿри тата вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтермелли программа вырăнне хурса йышăнчĕç; вĕсем ырми-канми ĕçлеççĕ, хĕçпăшалсемпе боеприпассем, çавăн пекех оборона валли ытти продукцисем туса кăларас ĕçре пысăк çитĕнÿсем тăваççĕ.

Чылай предприятисем, производствăри çĕршер новаторсем, вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем, партире тăракан тата партире тăман большевиксем оборудованипе туллин усă курасси[illegible]

[illegible]

Заводра çамрăк кадрсене вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Çавна пула çамрăк рабочисем кĕске вăхăт хушшинчех пĕр-пĕр ăсталăха вĕренсе çитнĕ. Работница Захарова юлташ май уйăхĕнче нормăна 63 процент тултарнă пулсан, июнь уйăхĕнчех вăл 120 процент тултарнă, Портнова юлташ та малтан нормăна 73 процент тултарса пынă, июнь уйăхĕнче вара вăл 130,5 процент тултарма пултарнă, Смирнова юлташ нормăна 70 процент тултарнă пулсан, халĕ 134 процент таран тултараса пырать.

Заводра стахановецсемпе ударниксен йышĕ тăтăшах ÿсет. Штамповщица Н. М. Кац июнь уйăхĕнче ĕç нормине 246 процент, июль уйăхĕн малтанхи 15 кунĕнче 286 процент тултарнă. Токарь-револьверщик Смирнова юлташ июнь уйăхĕнче ĕç нормине 210 процент тултарнă, июль уйăхĕнче те вăл çавăн пекех лайăх ĕçлет. Сверловщица Турченкова июнь уйăхĕнче нормăна 242 процент пурнăçа кĕртнĕ, халĕ кашни кун 3—4-шар норма тăвать. Заводри лайăх çынсен пурин ятне те хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Икĕ хут Хĕрлĕ ялав илнĕ заводăн коллективĕ пĕр Халăх Комиссариачĕн заказне июлĕн 27-мĕшĕчен, заводăн июль уйăхĕнчи государственнăй планне пĕтĕмĕшпе июлĕн 29-мĕшĕчен пурнăçа кĕртме пулнă. Коллектив завода пĕр тикĕс ĕçлеттерессишĕн, талăкри графика производствăн çирĕп законĕ [illegible]

[illegible] новецсен становĕсем çине пĕчĕк хĕрлĕ ялавсем çакаççĕ. Коммунистсем хăйсем тавра партире тăман большевиксене туптăн пĕтĕçтерсе пынипе завод умĕнче тăракан задачăсем ăнăçлăн пурнăça кĕрсе пыраççĕ.

Социализмлă ăмăртăва анлăн сарнипе, рабочисен ăсталăхне куллен ÿстерсе пынипе ĕç тухăçлăхне хăпартма пултарнă, çакăнпа пĕрлех ĕç нормине тултарайман рабочисен йышĕ уйăхран уйăхах сахалланса пырать.

Заводра çамрăк кадрсене вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Çавна [illegible]

[illegible] предприятие заказ пана изделисене пурне те ыйтать, çавăнпа пур йышши изделисем тăрăх та производство планне тултарса пымалла.

Республикăри ытти предприятисемпе промысла артелĕсем те нумайĕшĕсем, вăл шутра Çĕмĕрле комбиначĕ, фосфорит завочĕ, Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь, чăлха фабрики, Шупашкарти табак фабрики т. ыт. те хăйсен обязательствисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç, июнь уйăхĕнче планран ирттерсе продукци туса кăларчĕç.

Çак предприятисенчи чи лайăх çынсем стахановла ĕçленин примерне кăтартаççĕ, ĕç тухăçлăхне кунран кунах ÿстереççĕ. Чăлха фабрикинчи комсомолка Попова юлташ икĕ машина çинче ĕçлет, кашни сменăрах нормăран ирттерсе 18 мăйăр носки е чăлха çыхса хатĕрлет. Сĕнтĕрвăрринчи судоверфьре Ф. Краличкин, А. Белов тата Маклашкин юлташсен фронтовой бригадисем икшер-виçшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Социализмла ăмăртса ĕçленипе чугунçул транспорчĕн пирĕн республикăри предприятийĕсем те чылайĕшĕсем июнь уйăхĕнче хисеплĕ вырăна тухрĕç. Канашри вагонсем юсакан завод (завод начальникĕ Поздняков юлташ, партбюро секретарĕ Сорокин юлташ, завком председателĕ Кисленко юлташ) июнь уйăхĕнче социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртрĕ, СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Соколовский юлташ начальник, Белоусов юлташ парторг, Сытник юлташ профсоюз комитечĕн председателĕ пулса ĕçлекен цех июль уйăхĕнче графика пур енĕпе те пурнăçа кĕртсе пырать. Токарев, Коломиец юлташсем начальниксем пулса тăракан цехсем те начар мар тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çав цехсенче двухсотниксемпе трехсотниксен йышĕ чылаях пысăк.

[illegible] цийĕн коллективне Хусан чугунçулĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă. Анчах çапах та, пĕтĕмĕшпе илсен, Канаш деповĕ çителĕксĕр ĕçлет-ха. Депори парторганизаци тата узелăн парти комитечĕ социализмлă ăмăртăва кирлĕ пек анлăн сарайман, коммунистсем производствăра малти вырăна кирлĕ пек йышăнайман.

Рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарнипе тата партиллĕ-политикăллă ĕçе тĕрĕс организацилеменнипе Улатăрти депо (начальникĕ Подмарков, парторганизацин секретарĕ Ерилин юлташсем) ăмăртура июнь уйăхĕнче Хусан чугунçулĕ çинче виççĕмĕш вырăна тухрĕ. Анчах деповăн ĕçĕ лайăхланнипе пĕрлех, унта пысăк çитменлĕхсем пур. Чи пысăк çитменлĕх вăл паровозсене хăлхене кирлĕ пек хатĕрлеменни пулса тăрать. Депо начальникĕн тата парторганизацин вăрçă вăхăтĕнчи икĕмĕш хĕле пур енчен те хатĕрленсе кĕрес ĕç çине ытларах çаврăнса пăхмалла.

Отечественнăй вăрçă пирĕн çĕршывра патриотизмла çĕнĕ çĕкленÿ пуçарчĕ. Çав çĕкленÿ хăватлă социализмлă ăмăртăва вăй парса тăрать. Ăмăрту производствăра талантлă çĕнĕ организаторсене, стахановла ĕçĕн мастерĕсене ÿстерет. Пирĕн предприятисем хĕрÿ ăмăртура чылай çитĕнÿсем турĕç. Анчах тумалли ĕçсем нумай-ха. Хăшпĕр предприятисем ăмăртура юлса пыраççĕ, илнĕ обязательствăсене çеç мар, государство панă плансене те тултараймаççĕ. Улатăрти паровозсем юсакан завод (завод начальникĕ Крупский юлташ, парторганизаци секретарĕ Макаров юлташ, завком председателĕ Демидов юлташ) чи кирлĕ продукцисем туса кăларас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Заводра пур рабочисене те ăмăртăва явăçтарса çитермен, вăтам рабочисен ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе те сахал ĕçлеççĕ. Июнь уйăхĕнче çавăн пекех паровоз хуçалăхĕн Улатăрти отделенийĕ начар ĕçлерĕ, вăл июль уйăхĕнче те ĕçе лайăхлатни палăрмасть. Шупашкарти тир-сăран комбиначĕ, Бувискри сланец кăларакан рудник, Ивановăри тата Шупашкарти кирпĕч завочĕсем хăйсен производство планĕсене çаплах тултараймаççĕ. Вырăнти промышленноçăн, апат-çимĕç промышленноçĕн тата промысла кооперацин предприятийĕсем те хăйсен ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Ĕçĕн результачĕсем çинчен пĕлтерсе тăни тата вĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарса кăтартни ăмăртăва аталантармалли май пулса тăрать. Çапла туни ытти рабочисене малта пыракансем пек ĕçлеме, вĕсене хăваласа çитме пулăшать. Анчах республикăри хăшпĕр наркоматсемпе промысла кооперацин союзĕсем социализмлă ăмăртăва çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Вырăнти промышленность халăх комиссариатĕнче (Васильков юлташ), промсоюзра (Воротилов юлташ) предприятисемпе артельсем илнĕ социализмлă обязательствăсем июнь уйăхĕнче пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслесе тухман, лайăх ĕçлекен предприятисемпе стахановецсене палăртман. Çавна пула асăннă наркоматпа промсоюз системине кĕрекен чылай предприятисем июнь уйăхĕнчи заданисене пурнăçлаймарĕç, июль уйăхĕнче те çавăн пекех сÿрĕккĕн ĕçлеççĕ.

Республикăри наркоматсемпе системăсен руководителĕсен задачи социализмлă ăмăрту мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăрасси, малта пыракансене хавхалантарса, юлса пыракансене пулăшса тăрасси пулать.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсем тата республикăри малта пыракан предприятисемпе [illegible] водствăна лайăхлатассишĕн, оборудованисемпе лайăхрах усă курассишĕн, рабочисемпе инженерла-техникла кадрсене тĕрĕс вырнаçтарса тухассишĕн тăрăшмалла. Çапла майпа продукци туса кăларассине уйăхран уйăха вăйлатса пымалла. Çав вăхăтрах парти организацийĕсен продукци пахалăхĕ çинчен те манма юрамасть, пахалăхлă продукци паракансене мухтамалла, пахалăха пăсакансене тÿрлетмелле.

Фронта кирлĕ продукцисем ытларах та ытларах туса кăларас задача массăллă хушшинчи партиллĕ-воспитаниллĕ ĕçе лайăхлатма хушать. Воспитани ĕçне, хăшпĕр предприятисенчи пек, лайăх ĕçлекен рабочисем хушшинче çеç мар, мĕнпур рабочисем хушшинче туса пымалла.

Халĕ, отечественнăй аслă вăрçăн историллĕ кунĕсенче, тылри совет çыннисен ĕç содержанине «Йăлтах вăрçă валли! Йăлтах çĕнтерÿ валли!» текен лозунг татса парать.

Çак лозунга пурнăçа ăнăçлăн кĕртесси парти организацийĕсен ĕçĕнчен, вĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва ертсе пыма пултарнинчен, ĕçсыннисен мĕнпур массисене хăйсем хыççăн ертсе кайма пултарнинчен килет. Çавăнпа та политикăллă ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхас пулать.

Наркоматсен, директорсен приказĕсем тата парторганизацисен решенийĕсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине вăхăтра тĕрĕслесе тăрасси—парти руководствин чи кирли пулса тăрать. Ĕç пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслесе тăмасăр парторганизаци енчен тĕрĕс руководство пулма пултараймасть.

Хальхи вăхăтра, йывăр çапăçусен вăхăтĕнче, кашни совет патриочĕн хăйĕн пĕтĕм вăй-хăватне хурса ĕçлес пулать, мĕнпур ĕçе тăван çĕршыва хÿтĕлесе хăварас тĕллевпе тăвас пулать. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пирĕн фронтпа тылăн пĕрлĕхне татах та ытларах çирĕплетет.

Сталин юлташ майăн пĕрремĕшĕнчи историллĕ приказра панă кăтартусене пирĕн республикăри ĕçсыннисем чыслăн пурнăçласси пирки нимĕн иккĕленмелли те çук.

Вĕренекенсем колхозсене пулăшаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Колхозсенче хĕрÿллĕ ĕç пырать: çум çумлаççĕ, утă çулаççĕ, силос хываççĕ, уборкăна хатĕрленеççĕ. Çак ĕçсене тунă çĕрте колхозсене вĕренекенсем те пысăк пулăшу параççĕ.

Мăн Улхашри вăтам шкулта вĕренекенсем «Красноармеец» колхозра ĕçлеççĕ. Вĕсенчен ятарласах 9 отряд организациленĕ. Кашни отряда учитель ертсе пырать. Ку таранччен вĕсем темиçе вунă гектар çум çумланă, тислĕк тăкнă, тата ытти ĕçсене те тунă, паянхи куна 90 ача 1.620 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Хутарти вăтам шкулта вĕренекенсенчен уйхир ĕçĕнче 110 ача ĕçлет. Чылайăшĕсем обязательнăй йĕркепе тумалли ĕçкунĕсен минимумне темиçе хут ирттерсе тултарчĕç. Акă 7-мĕш класра вĕренекен В. Петров — 100 ĕçкунĕ, Н. Никитин — 51 ĕçкунĕ тунă.

Чăваш Улхашри тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем те ĕçре пример кăтартаççĕ. 6-мĕш класра вĕренекенсем: А. Ортиков—70 ĕçкунĕ, Виктор Мизяков — 40 ĕçкунĕ, Иван Ортиков — 50 ĕçкунĕ, 2-мĕш класра вĕренекен Денис Грудаков 20 ĕçкунĕ тунă.

Шкул ачисем колхоз производствинче пример кăтартса ĕçленипе пĕрлех обществăллă ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ.

Макаç ялсоветĕнчи колхозсенче

СЕНТЕРВĂРРИ, июлĕн 17-мĕш. (Телефонпа). Макаç ялсоветĕнчи «14 лет Чувашии» колхоз утă çулса пухас ĕçе июлĕн 14-мĕшĕнче районри колхозсенчен чи малтан вĕçлерĕ. Утă çулас ĕç пысăк çĕкленÿпе пулса иртрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлни ĕçре кая юлса пыракансене лайăхрах ĕçлеме пулăшса пычĕ.

Ĕçре уйрăмах В. Ярцева, Р. Александрова, П. Кубарева колхозниксем хавхаланса хĕрÿллĕн ĕçлерĕç. Александров юлташ ертсе пыракан бригада ударлăн ĕçлерĕ.

Халĕ колхозниксем утă купписене турттарса капансене хываççĕ. 1942 çулти обязательство шучĕпе колхоз государствăна икĕ тоннăна яхăн утă леçсе пачĕ.

Ялсоветĕнчи «Октябрь» колхоз кăçалхи тулăх тырпула лайăх пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленет. Паянхи куна колхоз 2 жнейка, 2 сеялка, 23 урапа юсаса хунă. Колхозницăсем михĕсемпе пăналăксене саплаççĕ, тырă амбарĕсене тасатаççĕ. Июлĕн 13-мĕшĕнче колхоз утă çулса пĕтерчĕ.

С. ПЕТРОВ.

Пирĕн самолетсем Кенигсберг çине çĕнĕрен вĕçсе пырса тапăнни

Июлĕн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пĕр ушкăнĕ йывăр метеорологиллĕ условисенче Кенигсберг хулинчи тата унăн районĕнчи çарпа промышленность объекчĕсем çине тепĕр хут бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнипе хулара 6 тĕпе вăйлă пушар тухнă тата 4 хутчен вăйлă взрыв пулнă.

Ют çĕршывсенче

„Сирĕн Гитлер çынних приказне пăхăнмалла мар"

Обуано адмирал Францин Александрире тăракан çар карапĕсен экипажĕсене чĕнсе калани

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕш. (ТАСС). Виши правительстви Францин Александрире тăракан эскадрин командующине Годфруз адмирала приказ панă, çав приказра вăл карапсене кирек мĕн пулсан та Александрирен илсе тухма юраманни çинчен каланă. Кĕрешекен Францин тинĕс-çар вăйĕсен главнокомандующийĕ Обуано адмирал çавăнпа çав карапсен экипажĕсене Виши правительствин сутăнчăкла приказне ан пăхăнăр тесе чĕнсе каланă. Ăна пурнăça кĕртнине пула Франци карапĕсене тĕнĕл держависем тытса илме пултараççĕ, тенĕ.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 20-мĕшĕнче Англи истребителĕсен темиçе соединенийĕ Çурçĕр Франци çине вĕçсе пырса тапăннă. «Бостон» йышши бомбардировщиксем электростанцие атакăланă.

Египетри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер Египетри фронтра çĕр çинче патрульсен ĕçĕсенчен пуçне урăх нимĕнле операци те пулман. Анчах Англи авиацийĕ активлăн кĕрешнĕ, вăл противникăн Кук çывăхĕнчи аэродромĕ çине ăнăçлăн вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем çĕр çинчи самолетсене тÿрĕ пырса лекни палăрнă, çав самолетсенчен нумайĕшне вут тивнĕ е сиенленнĕ.

Июлĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Мерса-Матрух çине тинĕсрен пенĕ. Июлĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин тинĕс-çар вăйĕсем Мерса-Матруха тепĕр хут атакăланă.

Германин Балканри союзникĕсем хушшинчи харкашу

Германин Балканри союзникĕсем хушшинче хирĕçÿ вăйланса пырать. Румынипе Словакия Венгрие хирĕç тăраççĕ. Венгрия Болгарипе пĕрлешнĕ. Илнĕ хыпарсем тăрăх, вăл унпа вăрçă тĕлĕшпе договор та тунă. Çав икĕ çĕршыва акă мĕн пĕрлештерет: Румыния, Германия хушнă тăрăх, Çурçĕр Трансильванине Венгрие панă, Добруджа — Болгарие панă. Халĕ Румыни çав территорисене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра тÿснĕ пысăк çухатусемшĕн каялла ыйтать. Хорвартипе Словаки Венгрие хăйсен тăшманĕ тесе шутлаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Германия Венгрие (вăл Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра хутшăнса çапăçнăшăн) Хорватипе Словаки территорийĕсенчен çĕр татса парасран хăраççĕ. Çав хирĕçÿсене пула Венгрипе Румыни чиккинче ялан хĕçпăшаллă тытăçусем пула-пула иртеççĕ. (ТАСС).

КĔСКЕН

Костарика правительстви Германин подданнăйĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма тата çĕршывран тухса кайма чармалли приказ кăларнă. Вăл приказ старикcене тата «государствăри йĕркесене пăхăнса тăни паллă пулнисене» çеç тивмест; çавăн пеккисен вара килти арест йĕркипе пурăнмалла пулать.

* * *

Атлантика океанĕнче Кăнтăр Америкăн çурçĕрти çыранĕнчен темиçе çĕр мильăра Америкăн виçĕ суту-илÿ пароходне торпедăланă, вĕсен пысăкăшĕсем вăтам пулнă. Атлантика океанĕнчех Пĕрлешÿллĕ Штатсен хĕвелтухăç çыранĕнчен инçех мар вырăнта Америкăн тепĕр вăтам пароходне торпедăланă.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Тула облаçĕнче шкул çурчĕсене юсаççĕ

Нимĕçсен фашистла бандисем Тула облаçĕнче 1.090 шкула çунтарса янă, çĕмĕрсе пĕтернĕ. Вĕсене юсама государство укçа 8 миллион тенкĕ ытла панă.

Тула облаçĕнчи ĕççыннисем шкул çурчĕсене нумайĕшне хăйсен вăйĕпе, государство укçине расходламасăр юсама пулнă. Вĕсем 600 çурта ытла юсаса, шкулсем валли юрăхлă туса хунă та ĕнтĕ.

Районсенче нумайĕшĕнче партăсем, сĕтелсем, класнăй доскасем тата ытти тĕрлĕ сĕтел-пукан тумалли мастерскойсем уçнă. (ТАСС).

Колхозниксем—малта пыракан заводри рабочисене

Саратов облаçĕнчи Ворошилов районĕнчи колхозниксем çав облаçра малта пыракан «Трактородеталь» заводăн коллективĕ валли çимĕç обозĕ янă. Вăл обозра 2.500 килограмм çĕрулмипе хăярсем, çу, какай, сĕт, çăмартасем, пахча-çимĕçсем тата тĕрлĕ çырласем нумай. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

АЛАТЫРСКАЯ ШКОЛА МЕДСЕСТЕР
объявляет прием учащихся на 1942—43 учебный год.

Срок обучения 1 год.

В школу принимаются лица в возрасте от 15 до 35 лет с образованием классов неполной средней школы.

Окончившие в 1941 и 42 годах неполную среднюю школу и 8, 9, 10 классы средней школы принимаются без испытаний.

Остальные поступающие подвергаются испытаниям по русскому языку и литературе, математике и Конституции СССР.

Приемные испытания с 25 по 30 августа.

Заявления подаются на имя директора школы с приложением документов: 1) об образовании, 2) свидетельства о рождении, 3) справки о здоровьи и 4) 2 фотокарточек.

Адрес: г. Алатырь, ул. Ленина, № 8.

2—2.

ФЗУ Чебоксарской хлопчато-бумажной фабрики
объявляет набор подростков не моложе 16 лет с образованием не ниже 4-х классов в группы:
1) ткачей,
2) съемщиц на ватерах.

Срок обучения 3½ месяца.

Учащиеся обеспечиваются стипендией, хлебными карточками и питанием в столовой фабрики.

За справками обращаться в канцелярию школы: ул. Володарского, дом № 5 (Дом печати), 2-й подъезд, 2-й этаж, ежедневно кроме общевыходных дней.

Зав. ОПК.

3—1.

Наркомхозу Чувашской АССР требуются на постоянную работу экономист, управделами и бухгалтер.

С предложениями обращаться: город Чебоксары, ул. К. Маркса, 3.

Отдел кадров.

МОСКОВСКИЙ ГИДРОТЕХНИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ ОТКРЫВАЕТ ФИЛИАЛ В ГОР. МАРИИНСКОМ-ПОСАДЕ ЧУВ. АССР,

об'являет прием студентов на первый курс 1942—43 учебного года.

Учебные занятия на первом курсе института в 1942—43 учебном г. будут производиться при Мариинско-Посадском техникуме землеустройства и мелиорации профессорами и преподавателями Московского гидротехнического института, а со 2-го курса — в Москве.

Институт готовит высококвалифицированных инженеров-гидротехников для строительства гидроэлектростанций, гидротехнических сооружений, для производства насосных станций, буровых работ, водопроводов, торфоразработок, с/хоз. мелиорации, установки ветродвигателей, готовит педагогические кадры для гидромелиоративных техникумов.

Окончившие средние школы, рабфаки и техникумы в 1941—42 годах на I курс института принимаются без испытаний, а окончившие указанные школы ранее подвергаются испытаниям: по математике, физике, химии, русскому языку и литературе.

Техникум имеет хорошую столовую, свою продовольственную базу, учебное оборудование. Принятые будут обеспечены квартирой, постельным бельем, а отличники учебы и демобилизованные из РККА по болезни обеспечиваются стипендией.

Желающие поступить должны подать заявления с соответствующими документами по адресу: гор. Мар. Посад, земтехникум.

Все подробности можно узнать в канцелярии земтехникума.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 8—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 569 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.